Муркаш район хаҫачӗ

# Ҫӗнтерӳ ялавӗ

1944 ҫулхи ҫу уйӑхӗн 5-мӗшӗнченпе тухать

58 (8124) № * Шӑмат кун, 2013 ҫулхи ҫурла (август) уйӑхӗн 10-мӗшӗ * Хакӗ ирӗклӗ

Ыран – Строитель кунӗ

**ЧӐВАШ ЕН СТРОИТЕЛЬСТВО ОТРАСЛӖН ХИСЕПЛӖ ӖҪЧЕНӖСЕМ ТАТА ВЕТЕРАНӖСЕМ!**

Сире професси уявӗпе – Строитель кунӗ ячӗпе чун-чӗререн саламлатӑп!

Чӑваш Ен строителӗсен пултаруллӑ ӗҫне пула пирӗн республика ҫулсерен ҫӗнелсе улшӑнать, капӑрланать, пурӑнмалли ҫӗнӗ микрорайонсем тата урамсем ӳсе-ӳсе ларассӗ, ача сачӗсемпе пӗтӗмӗшле пӗлӳ паракан шкулсем, спорт сооруженийӗсем, сывлӑх сыхлавӗн культура объекчӗсем ҫӗкленессӗ, ҫулсем тӑвасси тата юсасси, картишсене тата вӗсем патне пымалли ҫулсене тирпей-илем кӗртесси йӗркеллӗн пулса пырать.

Республикӑра строительство отраслне аталантарасси ҫине уйрӑмах тимлӗн пӑхассӗ. Ҫурт-йӗр условийӗсене лайӑхлатмашкӑн граждансене пулӑшас енӗпе патшалӑх программисем пурнӑҫланассӗ, экономкласс йышши ҫурт-йӗр лартмалли ҫӗр лаптӑкӗсем йӗркеленессӗ, Патшалӑхӑн пурӑнмалли ҫурт-йӗр фончӗн калӑпӑшӗ пысӑкланать, пурӑнмалли ҫуртсене тӗпрен юсас тата граждансене ишӗлекен ҫуртсенчен куҫарас енӗпе палӑртнӑ тӗллевсем тухӑҫлӑн пурнӑҫланса пырассӗ.

Республика Правительстви йышӑннӑ мерӑсене пула Чӑваш Ен пӗр ҫын пуҫне хута яракан пурӑнмалли ҫурт-йӗр енӗпе федерацин Атӑлҫи округӗнче тата Раҫҫейре малти вырӑнта. Инноваციллӗ тата энерги перекетлекен технологисене ӗҫе кӗртни, строительство продукцийӗн калӑпӑшне тата пахалӑхне ӳстерни строительство комплексӗн вӑй-хӑватне пысӑклатма пулӑшать.

Чӑваш строителӗсен мухтавлӑ йӑли-йӗркине тивӗҫлипе упраса ҫамрӑк ӑрӑва парса хӑварнӑ отрасль ветеранӗсене чунтан тав тӑватӑп. Сире тата сирӗн ҫывӑх ҫынӑрсене ҫирӗп сывлӑх, ырӑ тӗллевӗрсемпе ӗҫӗрсене пурнӑҫлама телей тата ырлӑх сунатӑп.

**Чӑваш Ен Пуҫлӑхӗ М. ИГНАТЬЕВ.**



**Эдуард Воронов Муркашри кирпӗч заводӗнче сакӑр ҫул ӗҫлет. Ӑста платник – тӑрӑшуллисенчен пӗри, ҫамрӑк специалистсемшӗн – пултаруллӑ вӗрентекен, ыттисемшӗн вара – шанчӑклӑ тус-юлташ. Асӑннӑ ӗҫ тапхӑрӗнче вӑл пӗрре кӑна мар ырӑ ята тата тав сӑмахне тивӗҫнӗ.**

**ХИСЕПЛӖ СТРОИТЕЛЬСЕМ! ҪАК ӖҪӖН ВЕТЕРАНӖСЕМ!**

Сире професси уявӗпе – Строитель кунӗ ячӗпе пӗтӗм чун-чӗререн саламлатӑп!

Эсир тӑрӑшнипе пирӗн район кунран-кун илемлӗрех те хӑтлӑрах пулса пырать, ҫынсен пурнӑҫ условийӗсем те лайӑхланса пырассӗ. Эсир ҫӗнӗрен те ҫӗнӗ ҫуртсем ҫӗклетӗр, ҫулсем тӑватӑр, юсатӑр. Сирӗн тӑрӑшулӑхӑра пулах районти пур ялта та ҫут ҫанталӑк газӗ ҫунать. Тавах сире район аталанӑвӗшӗн ырми-канми вӑй хунӑшӑн.

Пурне те ырлӑх-сывлӑх, телей, ӑнӑҫу, килӗшӳпе тату пурнӑҫ сунатӑп. Малашне те ялсен инфраструктурине аталантарассинче ӳсӗм хыҫҫӑн ӳсӗм тумалла пултӑрччӗ сирӗн. Умри тӗллевӗрсем пурнӑҫлансах пычччӑр. Эсир ҫынсене парнелекен савӑнӑҫ хӑвӑр патӑра та ырӑлӑхпа таврӑнтӑр.

**Район администрацийӗн пуҫлӑхӗ Р. ТИМОФЕЕВ.**

Паян – Физкультурник кунӗ

**ХАКЛӐ ЕНТЕШӖМӖРСЕМ!**

Сире Физкультурник кунӗ ячӗпе саламлатӑп!

Физкультура сывлӑха ҫирӗплетме, ӑс-хакӑлпа ӳт-пӗве пиҫӗхтерме, ҫын характерӗпе кӑмӑлне йӗркелеме пулӑшни тахҫанах паллӑ.

Чӑваш Республикинче спорта аталантарас, ҫынсене физкультурӑпа туслашма пулӑшас, сывӑ пурнӑҫ йӗркине пропагандӑлас тӗлӗшпе ҫине тӑрса ӗҫлессӗ. Юлашки ҫичӗ ҫулта спортӑн 50 ытла объектне хута янӑ тата юсаса ҫӗнетнӗ. Чӑваш Енри физкультурӑпа тата спортпа туслӑ ҫынсен йышӗ пӗтӗм халӑхӑн 30,5 процентчӗпе танлашнӑ, ҫакӑ Раҫҫейри вӑтам кӑтартуран (20,6 процент) пӗрре ҫурӑ хут пысӑкрах.

Ачасемпе ҫамрӑксен спортне аталантарасси – мӗн пур шайри влаҫ органӗсемшӗн тата общество организацийӗсемшӗн пысӑк пӗлтерӗшлӗ тӗллев. Спорт резервне хатӗрлессипе Чӑваш Республикинче 56 спорт шкулӗ ӗҫлет, вӗсенче 30 пин ытла ҫамрӑк спортсмен хӑйӗн пултарулӑхне туптать. Ачасемпе ҫамрӑксен спорт шкулӗсен пурлӑх никӗсне ҫирӗплетес тӗллевпе республикӑра туса лартнӑ мӗн пур физкультурӑпа спорт комплексне асӑннӑ шкулсен балансӗ ҫине куҫарнӑ. Ҫакӑн пек тӗллев лартнӑ: 2015 ҫулта республикӑри кашни иккӗмӗш ача ачасемпе ҫамрӑксен спорт шкулӗнче спортпа туслашма пултартӑр.

Чӑваш Енре ҫӗр-шывӑмӑр чысне тӗрлӗ ӑмӑртура хӳтӗлеме тивӗҫекен спортсменсен йышӗ ҫулсерен ӳсет. Чӑваш Республикин 147 спортсменне спортӑн тӗрлӗ енӗпе Раҫҫейӑн пӗрлештернӗ командисене кӗртнӗ. Шупашкарта маунтинбайк, биатлон тата ухӑран перес енӗпе регионти центрсем тума палӑртнӑ. Ҫакӑ, паллах, спортӑн асӑннӑ тӗсӗсене аталантарма ҫӗнӗ вӑй-хал кӳрӗ.

Пирӗн республикӑра тӑтӑшах иртекен Пӗтӗм Раҫҫейри тата тӗнчери ӑмӑртусем те массӑллӑ спорта аталантарас ӗҫре пысӑк вырӑн йышӑнассӗ. 2015 ҫулта Шупашкарта ҫӑмӑл атлетика енӗпе иртекен Европӑн командӑсен VI чемпионачӗ (суперлига) – спорт пурнӑҫӗнчи чи паллӑ пулӑм.

Хӑйсен ырӑ тӗслӗхӗпе ҫамрӑксене хавхалантарса пыракан Чӑваш Енри физкультурӑпа спорт юхӑмӗн ветеранӗсене уйрӑммӑн тав тӑватӑп. Мӗн пур спортсмена, физкультурника, сывӑ пурнӑҫ йӗркине кӑмӑллакан кашни ҫынна ырӑ шанӑҫ, лайӑх кӑмӑл-туйӑм тата чунпа хастар пулма сунатӑп!

**Чӑваш Ен Пуҫлӑхӗ М. ИГНАТЬЕВ.**

**ХИСЕПЛӖ ФИЗКУЛЬТУРНИКСЕМ, СПОРТСМЕНСЕМ, СПОРТПА ТУСЛӐ ҪЫНСЕМ ТАТА ФИЗКУЛЬТУРА ЮХӐМӖН ВЕТЕРАНӖСЕМ!**

Сире Физкультурник кунӗ ячӗпе ӑшшӑн саламлатӑп!

Физкультурӑпа спорт пире ҫирӗп сывлӑхлӑ пулма, кӑмӑла ҫирӗплетме пулӑшассӗ. Сывлӑхлӑ, ҫирӗп кӑмӑл-туйӑмлӑ, сывӑ пурнӑҫ йӗркипе пурӑнакансем йывӑрлӑхсене ҫӗнтерме пултарассӗ, умри тӗллевсене пурнӑҫлассӗ, районтӗрекӗ пулса тӑрассӗ. Ҫавӑнпа та пирӗн, аслисен, ачасене мӗн пӗчӗкрен спортпа туслӑ пулма вӗрентмелле. Ҫитӗнекен ӑрӑва мӗн пӗчӗкрен физкультурӑпа спорта явӑҫтарассипе ҫине тӑрса ӗҫлемелли ҫинчен Республика Пуҫлӑхӗ М.В. Игнатьев хӑйӗн Патшалӑх Канашне янӑ Ҫырӑвӗнче те палӑртсах каларӗ. Ку енӗпе вара пирӗн хамӑрӑн, аслисен, вӗсемшӗн ырӑ тӗслӗх пулмалла.

Пирӗн ентешсем республика шайӗнче ҫеҫ мар, Раҫҫей, Европа, тӗнче шайӗнчи ӑмӑртусене хутшӑнассӗ, ҫӗнтерӳсем тӑвассӗ. Ҫапла майпа районӑн ятне-сумне ҫӗклессӗ. Ҫакӑ та эсир хӑвӑрӑн тивӗҫӗрӗ чун-чӗре хушнипе пек пурнӑҫланине кӑтартса парать. Тавах сире пархатарлӑ ӗҫӗршӗн. Малашне те физкультурӑпа спорт районта пурӑнакансемшӗн малти вырӑнта тӑтӑр.

Сире малашне татах та пысӑкрах ҫитӗнӳсем тума ҫирӗп сывлӑх, телей, ӑнӑҫупа ӑнтӑлу, хавхалану сунатӑп.

**Район администрацийӗн пуҫлӑхӗ Р. ТИМОФЕЕВ.**

Районта: ӗнер, паян, ыран

## План пурнӑҫланнӑ

«Муркаш районӗ пурӑнмалли ҫурт-йӗр ӗҫе кӗртессипе 7 уйӑх планне 101,4 процент пурнӑҫларӗ», – палӑртнӑ Чӑваш Республикин строительство, архитектура тата пурӑнмалли ҫурт-йӗрпе коммуналлӑ хуҫалӑх министрӗн ҫумӗ Иван Новиков. Ҫак пӗтӗмлетӗве вӑл район администрацийӗн ларусем ирттермелли залӗнче Муркаш, Етӗрне, Элӗк, Шупашкар районӗсенчи ял тӑрӑхӗсен пуҫлӑхӗсемпе ирттернӗ канашлура пӗлтернӗ.

Тӗл пулӑвӑн пӗлтерӗшпе уснӑ май вӑл муниципалитетсенче инвентаризацилесе шута илмен е техника параметрӗсене тивӗҫтермен ҫурт-йӗр пуррине палӑртнӑ. Ҫавӑнпа та учет кӑтартӑвӗсемпе ҫыхӑнса тӑман ҫурт-йӗре тупса палӑртасси – паянхи тӗп ыйтусенчен пӗри.

Министр ҫумӗ ял тӑрӑхӗсен пуҫлӑхӗсем пулӑшнипе пурӑнмалли ҫурт-йӗре ӗҫе кӗртессипе плана муниципалитетсенчи пекех республикӑра та 100 процентчӗпех пурнӑҫлама май пуррине палӑртнӑ.

Канашлу хыҫҫӑн район администрацийӗн пуҫлӑхӗн ҫумӗ – капиталлӑ строительство тата обществӑлла инфраструктурӑна аталантарассин управленийӗн пуҫлӑхӗ В. Никитин хамӑр районти ял тӑрӑхӗсен пуҫлӑхӗсемпе тӗл пулу ирттернӗ. Владимир Германович пирӗн енре ҫичӗ уйӑхра 10500 тӑваткал метр пурӑнмалли ҫурт-йӗр хута янине палӑртнӑ.

## Вакансисен ярмӑрккикки

Ӗҫ тупас ӗмӗтпе районти ӗҫпе тивӗҫтерекен центра пыракансем сахал мар. Ӗҫпе тивӗҫтерес ыйтӑва татса парассинче вакансисен ярмӑрккин пӗлтерӗшӗ пысӑк. Практика специализациленӗ вакансисен ярмӑрккине усӑллӑраххине кӑтартса парать.

Районти ӗҫ рынокӗнчи лару-тӑрӑва тишкерсе тата ҫамрӑксене ӗҫпе тивӗҫтерес ыйтӑва татса пама ҫултӑлӑк пуҫланнӑранпа вакансисен 4 мини-ярмӑрккине ирттернӗ. Вӗсен эффективлӑхне асӑннӑ ярмӑрккасене 91 ҫын пыни тата вӗсенчен 89-шне ӗҫпе тивӗҫтерме май килни ҫирӗплетет.

**А. БЕЛОВ хатӗрленӗ.**

Вырма – 2013

## Ҫӗнӗ тырӑ килет

Ҫумӑрсӑр кунсем тӑнипе усӑ курса районти пӗрлешӳллӗ тата хресчен (фермер) хуҫалӑхӗсен пиҫнӗ тырӑ пуссисенче иртен пуҫласа сӗм тӗттӗмчченех «хир карапӗсем» ӗҫлессӗ.

Район администрацийӗн экономикӑпа АПК аталанӑвӗн пайӗнчен пӗлтернӗ оперативлӑ кӑтартусемпе районти ҫӗр ӗҫченӗ августӑн 9-мӗшӗ тӗлне 3965 гектар (27 процент) ҫинче вырма ӗҫсем ирттернӗ. Хӑш-пӗр хуҫалӑхсенче вырма ӗҫсем ӑнӑҫуллӑрах пырассӗ. Асӑннӑ кун тӗлне «Восток», «Оринино» пӗрлешӳллӗ хуҫалӑхсемпе «ВаСем» чикӗллӗ яваплӑхлӑ обществӑра тата А. Пихтеровӑн хресчен (фермер) хуҫалӑхӗнче акнӑ тырӑ-пулӑн 50 процентне ытла вырса кӗртме пултарнӑ. Ҫав вӑхӑтрах «Передовик», Чапаев яч. хис. хуҫалӑхсенче 6 – 7 процент ҫеҫ вырнӑ.

Районӗпе гектар пуҫне тивекен вӑтам тухӑҫ – 20,1 центнер. Е. Андреев яч. хис., Суворов яч. хис. пӗрлешӳллӗ хуҫалӑхсемпе А. Афанасьевӑн хресчен (фермер) хуҫалӑхӗнче – 30 центнера яхӑн.

## Ҫӗнтерӳҫӗсем

Ял хуҫалӑх предприятийӗсенчи механизаторсем хушшинче вырма конкурсӗ малалла пырать. Унӑн килӗшӳвӗпе йӗркелӳ комитечӗ районти комбайнерсен ҫурла уйӑхӗн 1 – 7-мӗшӗсенчи ӑмӑртӑвӗн кӑтартӑвӗсене «хир карапӗсен» коэффициенчӗсемпе шутласа ҫакӑн пек пӗтӗмлетнӗ.

Пӗрремӗш вырӑнта – Петр Толикин фермер экипажӗ. Вӗсем «АКРОС-530» комбайнпа эрне хушшинче условлӑ единицӑпа 114,4 тонна тырӑ пухса кӗртнӗ. Вӗсене 1000 тенкӗлӗх преми свидетельстви панӑ.

Иккӗмӗш вырӑнта – А. Пихтеровӑн хресчен (фермер) хуҫалӑхӗнчи Александр Морозов экипажӗ. Вӗсем «Полесье-812» комбайнпа условлӑ единицӑпа шутласан 108,1 тонна тырӑ ҫапса тӗшӗленӗ, 800 тенкӗлӗх преми свидетельствине тивӗҫнӗ.

Виҫҫӗмӗш вырӑнта – «Оринино» хуҫалӑхри Ростислав Ильин экипажӗ («Енисей-1200»). Условлӑ единицӑпа 101,7 тонна тырӑ ҫапса тӗшӗленӗскерсене 500 тенкӗлӗх преми свидетельстви панӑ.

**А. БЕЛОВ.**

Ҫуралнӑ кунпа

## *Саламлатпӑр*



Юратнӑ хӗрӗме, йӑмӑка – Мулкачкасси ялӗнче пурӑнакан **Татьяна Васильевна ИВАНОВАНА** ҫуралнӑ кунӗ ячӗпе чӗререн саламлатпӑр. Чӑваш сурпанӗ пек вӑрӑм ӗмӗр, ҫӑл куҫ пек тапса тӑракан вӑйхӑват, ҫирӗп сывлӑх тата иксӗлми телей сунатпӑр. Турри сана пулӑшса вӑй-хал парнелетӗр, чир-чӗртен упраса тӑтӑр.

**Саламра: ашшӗпе амӑшӗ, аппӑшӗпе йыснӑшӗ тата вӗсен ачисем Антонпа Аня.**



Хорнуй ялӗнче пурӑнакан **Валентина Александровна СОРОКИНӐНА** чӗререн тухакан мӗн пур ӑшӑ та ҫепӗҫ туйӑмсемпе ҫуралнӑ кунӗ ячӗпе саламлатпӑр. Ҫирӗп сывлӑх, вӑрӑм кун-ҫул сунатпӑр, чир-чӗр санран пӑрӑнса ирттӗр. Эпир сана юрататпӑр. Ҫывӑх ҫынсем савӑнӑҫ ҫеҫ кӳччӗр. Ҫӗр ҫинчи мӗн пур ырри сан валли пултӑр.

**Саламлаканӗсем: мӑшӑрӗ, ывӑлӗпе хӗрӗ, кӗрӳвӗ, мӑнукӗ, тӑванӗсем.**

# Андрей Даниленко: «Сĕте ытларах хаклама пуçлăпăр»

Кăçал сĕт хакĕ пысăккине ял çыннисем хăйсемех пĕлеççĕ ĕнтĕ. Ытти çулхи пек анса лармарĕ вăл. «Сĕт хакĕ малалла та тивĕçлĕ шайра пулмалла. Сĕте малалла тата ытларах хаклама пуçлатпăр», – терĕ сĕт тăвакансен «Союзмолоко» Наци пĕрлĕхĕн правленийĕн председателĕ Андрей Даниленко иртнĕ кĕçнерни кун пирĕн районта пулнă май.

Вăл Чăваш Республикин ял хуçалăх министрĕн çумĕпе Николай Якимовпа, район администрацийĕн пуçлăхĕпе Ростислав Тимофеевпа тата унăн пĕрремĕш çумĕпе – экономика, АПК аталанăвĕн тата муниципаллă харпăрлăх управленийĕн ертÿçипе Владислав Ананьевпа «АФ «Путь Ильича» чикĕллĕ яваплăхлă обществăра пулса сĕт-çу фермин ĕçĕ-хĕлĕпе тата унăн малашлăх аталанăвĕпе паллашрĕ. Асăннă предприятин генеральнăй директорĕпе Олег Дельманпа сĕт туса илекенсемпе унран тĕрлĕ продукци хатĕрлекенсене патшалăх пулăшăвне памалли ыйтусене сÿтсе яврĕç.

Чи малтанах Олег Александрович предприяти ĕçĕ-хĕлĕпе тата унăн малашнехи планĕсемпе паллаштарчĕ, ферма тăрăх кăтартса çÿрерĕ. Андрей Львович куллен мĕн чухлĕ сĕт сунипе, унăн пахалăхĕпе кăсăкланчĕ. Вырăнта туса кăларакан продукципе паллашрĕ.

Палăртмалла, кунта куллен кашни ĕнерен 16–17 кг сĕт сăваççĕ. Сĕт-çу заводĕнче туса кăларнă 27 тĕрлĕ продукципе паллашрĕ. Вĕсем пахалăхлă пулнине палăртрĕ. Вĕсем магазинта выртакан тем те пĕр хушса хатĕрленĕ çимĕççенчен темиçе хут лайăххине, сывлăхшăн усăллине палăртрĕ.

Сĕт тăвакансен «Союзмолоко» Наци пĕрлĕхĕн правленийĕн председателĕ сĕт е унран тунă продукци çини сывлăхшăнах усăллă пулни çинчен каларĕ. Мускавра юлашки вăхăтра йĕркелекен «Сĕт сĕтелĕсем» çинче сĕтпе унран тунă çимĕçсем 40 процент хаклăрах пулсан та хула çыннисем вĕсене тÿрех илсе пĕтерни çинчен каларĕ. Çакă çынсем чăн-чăн таса продукци çиесшĕн пулни çинчен калать. «Республика пуçлăхĕпе сĕтпе унран тунă продукцисене пире куллен çиме хистекен видеороликсене халăх умне кăлармa калаçса татăлтăмăр. Хăвăрах курăр, акă халăх сĕте ытларах хаклама пуçлать», – терĕ вăл. Халăха сĕт çиме чĕнсе калакан программăн тĕллевĕ çакăн пек: кашни çыннăн кашни кун кашни апат çинĕ чухне сĕт е унран хатĕрленĕ çимĕçрен хăшне те пулин çимеллех. Çакă сывлăхшăн питĕ усăллă.

Çакна асăнса хăварам. Андрей Даниленко пирĕн республикăна Чăваш Республикинчи ял хуçалăх таварĕсене туса илекенсемпе тата «Сĕте çул парăр» ятпа иртекен авточупава хутшăнакансемпе пĕтĕм тĕнчери тата Раççейри сĕт рынокĕнче лару-тăру мĕнле пулнипе канашлу ирттерме килнĕ. Авточупав августăн 5–8-мĕшĕсенче иртрĕ. Ăна Раççейри выльăх-чĕрлĕх отрасльне тата сĕт индустрине пулăшас тата сĕт пĕлтерĕшне ÿстерес, çынсене сĕте тата унран тунă продукцие ытларах çимелли çинчен ăнлантарас тĕллевпе ирттернĕ.

Пĕтĕмĕшле вара сĕт тăвакансен «Союзмолоко» Наци пĕрлĕхĕн Правленийĕн председателĕ Андрей Даниленко Чăваш Енре, çав шутра Муркаш районĕнче те, сĕт туса илессипе йĕркеллĕ ĕçленине палăртрĕ. Район администрацийĕн пуçлăхне Р. Тимофеева çакăн пек пысăк предприятие ĕçлеме условисем туса панăшăн тав турĕ. Сĕт туса илекенсене патшалăх пулăшăвĕ кирлине палăртрĕ.

**Л. ПАВЛОВА.**

# Ĕçсем пĕр харăс капланаççĕ

**Ял хуçалăхĕ**

Çĕр ĕçченĕ хăй умне çанталăк кăларса тăратнă йывăрлăхсене çĕнессине, вырмана кÿлĕннипе пĕрлех выльăх апачĕ хатĕрлессине те кун йĕркинчен кăларас çуккине манмасть. Çак ответлă тапхăрта пĕрлешÿллĕ хуçалăхсен кĕр аки вăхăтра тата пахалăхлă ирттерессипирки те шутлама тивет. Обществăлла выльăх-чĕрлĕх фермисене хĕле хатĕрлессипе уйăхлăх пынине те вăхăтра пĕтĕмлетсе тăни çитменлĕхсене палăртма пулăшать. Кам паян правуртарах, унăн хĕл кунĕсем те тутă пулĕç. Шартлама сивĕре те вĕсем продукци илессипе алă усмĕç.

Маларах каланине тĕпе хурса çурла уйăхĕн 8-мĕшĕнче район администрацийĕ пĕрлешÿллĕ хуçалăхсен председателĕсемпе тата хресчен (фемер) хуçалăхĕсен ертÿçисемпе канашлу ирттерчĕ. Ăна район администрацийĕн пуçлăхĕ Р. Тимофеев уçрĕ тата ертсе пычĕ.

– Йывăрлăхсене пурсăмăр та курса тăратпăр. Вĕсене эпир пĕр тытăмра пулсан çеç çĕнме пулать. Çавăнпа та кĕрхи уй-хир ĕçĕсенче хуçалăх ертÿçисен пĕр-пĕрне пулăшасси пирки манас марччĕ. Тырă-пулă пур çĕрте те пĕр пек пиçсе пымасть. Çавна пула «хир карапĕсене» уйрăм хуçалăхсенче ĕçсĕр лартас марччĕ. Ăна валли ертÿçĕсен пĕр-пĕрин хушшинче тачă çыхăнура пулмалла, – ĕç калăпăшĕ пысăккине палăртса каларĕ Ростислав Николаевич.

Ял хуçалăх производство кооперативĕсенче паян вырма анлă сарăлчĕ пулин те, алăк умĕнче кĕр аки тăни пирки те манмалла мар. Хуçалăхсенчи ĕçсене пĕтĕмĕшле район администрацийĕн пуçлăхĕн пĕрремĕш çумĕ – экономикăпа АПК аталанăвĕн тата муниципаллă харпăрлăх управленийĕн пуçлăхĕ В. Ананьев сăнласа пачĕ.

Район администрацийĕн пуçлăхĕ Р. Тимофеев сĕт хуçалăхсемшĕн кулленхи укçа-тенкĕ çăл куçĕ пулнине палăртнăран Владислав Кириллович выльăх апачĕ янтăлас ыйту çинче тĕплĕн чарăнса тăчĕ.

Е. Андреев яч. хис. хуçалăхра сĕт ытларах сăвассипе ĕçлеме тăрăшаççĕ, кăтартусене ÿстереççĕ пулсан, «Передовик» хуçалăх пирки критикăлла сăмахсем пулчĕç.

«Россельхозцентр» ФГУ филиалăн районти пайĕн пуçлăхĕ А. Павлов кĕр аки вăхăтра ирттерес ыйтусем çинче чарăнса тăчĕ. Каласа хăвармалла, çурла уйăхĕн 18-мĕшĕнчен тытăнса авăн уйăхĕн 10-мĕшĕччен акса хăварнă кĕртирсен паха вăрлăхĕ – çитес çулхи пысăк тухăç никĕсĕ.

**А. ПЕТРОВ.**

**Юрă**

# Сана суйларăм чунăмпа

**Музыки Виталий Романовăн**
**Сăвви Игорь Майковăн**




Çÿл тÿпе ытамĕнчен хĕвелĕ
Саламларĕ йăл кулса пире.
Чун савни, пулар-и пит телейлĕ
Пĕр-пĕрне савса чун-чĕререн?

**Хушса юрламалли:**
Пурнăç тăрăх алран ал утма
Эп сана суйларăм чунăмпа.
Телейпеле çывăхрах пулма
Пăшăлтатрĕ пуль шăпа манпа.

Çупăрлать чуна асамлă туйăм,
Илĕртсе çиçет малашлăхпа.
Чун юрлать, илтсем, юратнă çыннăм,
Юнашар пулсассăн санпала.

Куçусем пăхаç епле ачашшăн
Ман çине, туятăп, тем кĕтсе.
Юратсах сана калатăп ăшшăн:
– Пулăпăр телейлĕ, ĕненсем.

# Пурнăç аталанăвĕ строительствăпа çыхăннă

**Строитель кунĕ умĕн**

***Ыран строительство сферинче вăй хуракансем хăйсен професси уявне – Строитель кунне паллă тăваççĕ. Çак мирлĕ те питех те кирлĕ професси çыннисен ĕçĕ чăннипех пархатарлă. Районта ку сфера мĕнле аталанса пынă пирки уяв умĕн район хаçачĕн сотрудникне В. ШАПОШНИКОВА панă интервьюра район администрацийĕн пуçлăхĕн çумĕ – капиталлă строительство тата обществăлла инфраструктурăна аталантарассин управленийĕн пуçлăхĕ Владимир НИКИТИН каласа пама кăмăл турĕ.***

– Ытти çулсенчи пекех кăçал та районта пурăнмалли çурт-йĕр, социаллă сфера объекчĕсем, çул-йĕр тăвас тата юсас ĕçсем анлă сарăлнă.

Кирек епле строительство ĕçĕ те проектпа смета документацийĕ туса хатĕрленинчен тытăнать. Хальхи вăхăтра пирĕн управлени Муркашри Восточная урамри тасатмалли биологи комплексĕн проектпа смета документацийĕсене хатĕрлет. Кунсăр пуçне Кашмашри Молодежная урамра çĕнĕ шкул çĕклеме палăртнă. Унăн документацине те туса хатĕрлеме тытăннă ĕнтĕ.

Хальхи вăхăтра çынсене çурт-йĕр строительствинче патшалăх пулăшăвĕпе тивĕçтермелли программăсем пĕрре кăна мар. Вĕсем районта ăнăçлă пурнăça кĕрсе пыраççĕ. Акă федерацин «Пурăнмалли çурт-йĕр» тĕллевлĕ программин «Çамрăк çемьесене пурăнмалли çурт-йĕрпе тивĕçтересси» подпрограммипе килĕшÿллĕн 2013 çулта 25 çамрăк çемье хăйсен пурнăç условийĕсене лайăхлатĕ. Çавна валли пĕтĕмпе 11,6 млн тенкĕне яхăн уйăраççĕ. Вăл шутран 3,6 млн тенкĕне яхăн федераци парать, 6,2 млн ытла тенкĕ республика тата 1,8 млн тенкĕне яхăн район бюджечĕсем уйăраççĕ. Паянхи куна илес пулсан ку çемьесем социаллă тÿлевсем илме документсене хатĕрлеççĕ ĕнтĕ.

Пурăнмалли çурт-йĕр условийĕсене лайăхлатма Юнкă ял тăрăхĕнчи нумай ачаллă пĕр çемьене кăçал республика бюджетĕнчен 1,45 млн тенкĕ уйăрса парса пулăшнă.

Аслă Отечественнăй вăрçă участникĕсемпе вăрçăра вилнĕ салтаксен тăлăх арăмĕсен пурăнмалли условийĕсене тĕрĕслесе тăратпăр, тивĕçлисене çурт-йĕрпе тивĕçтерме черете тăрататпăр. 2013 çулта кун пеккисем 16 ветеран хăйсен пурăнмалли çурт-йĕр условийĕсене лайăхлатма свидетельствăсене тивĕçрĕ.

Федерацин «Ялсен 2013 çулччenхи социаллă аталанăвĕ» тĕллевлĕ программипе пăхнă ĕçсене пурнăçлама çак вăхăта пур шайри бюджетсенчен пĕтĕмпе 7,3 млн тенкĕпе усă курнă. Вăл шутран ялсенче пурăнакансен çурт-йĕр условийĕсене лайăхлатма – 2 млн ытла тенкĕ, ялти çамрăк çемьесемпе çамрăк специалистсене çурт-йĕрпе тивĕçтерме – 5,7 млн тенкĕне яхăн. Çапла вара кăçал асăннă программăпа ялсенче пурăнакан 4 граждан тата 8 çамрăк специалист хăйсен пурăнмалли условийĕсене лайăхлатрĕ.

Ашшĕ-амăшĕсĕр юлнă 14 – 23 çулсенчи тăлăх ачасен харпăрлăхĕнчи çурт-йĕре юсама 2013 çул валли 258,8 пин тенкĕ уйăрса панă. Ку ĕçсене «Моргаушавтотехсервис» строителĕсем пурнăçлĕç. Çавăн пекех кăçалхи çул валли тăлăх тата ашшĕ-амăшĕсĕр юлнă ачасене пурăнмалли çурт-йĕрпе тивĕçтерме республика бюджетĕнчен 3,4 млн тенкĕне яхăн уйăрнă.

2007 çулта федерацин «Пурăнмалли çурт-йĕрпе коммуналлă хуçалăха реформăлама пулăшмалли фонд çинчен» Саккунне йышăннăччĕ. Унпа килĕшÿллĕн нумай хватерлĕ çуртсенче капиталлă юсав ĕçĕсем туса ирттеретпĕр, çынсене пурăнма юрăхсăр çуртсенчен куçаратпăр. Çав тĕллевпе юсав ĕçĕсем туса ирттерме кăçал 6,3 млн тенкĕ уйăрнă.

Юхăнчăк çуртсенче пурăнакансене йĕркеллĕ çурт-йĕрпе тивĕçтерессипе районта 2012 – 2015 çулсем валли муниципалитетăн тĕллевлĕ программине йышăннăччĕ. Ку программăпа пăхнă ĕçсене пурнăçлама 2013 çул валли пĕтĕмĕшле 19,4 млн тенкĕ уйăрнă. Пĕтĕмпе 20 çемье хăйсен çурт-йĕр условийĕсене лайăхлатĕ, 683,3 тăваткал метр юхăнчăк çурт-йĕрпе сыв пуллашăпăр.

Пĕтĕмĕшле пĕлÿ парассин системине модернизацилемелли комплекслă ĕçсен программипе килĕшÿллĕн вĕренÿ учрежденийĕсенче капиталлă юсав ĕçĕсем туса ирттереççĕ. Мăн Сĕнтĕрти, Йÿçкассинчи, Нискассинчи вăтам шкулсем валли кăçал çак тĕллевпе пур шайри бюджетсенчен 5 млн тенкĕне яхăн уйăрнă.

Шурча шкулĕнче канализаци системине юсама, электроэнергипе тивĕçтерессине йĕркелеме, шалти туалетсемпе тамбурта капиталлă юсав ĕçĕсем пурнăçлама ял тăрăхĕсенче коплекслă компактлă строительство ĕçĕсем пурнăçламалли пилот проекчĕпе 2,4 млн тенкĕне яхăн уйăрса панă.

Çул-йĕр строительствинче те пысăк ĕçсем пурнăçланаççĕ. Акă федерацин «Раççейри транспорт системине 2010 – 2020 çулсенче аталантарасси» тĕллевлĕ программипе район территорийĕнче М-7 «Волга» автомобиль çулне реконструкцилессипе ĕçсем анлă сарăлнă. Районта республика пĕлтерĕшлĕ çулсене пĕтĕмпе 10,295 км юсама тата тĕпрен юсама пăхнă, çавна валли 81,3 млн тенкĕ уйăраççĕ. Вăл шутра Муркаш – Турай çула тĕпрен юсамалла. Юсав ĕçĕсем валли 40 млн тенкĕ пăхса хунă. «Волга» – Мăн Сĕнтĕр – Шашкар пристанĕ автоçул çинче те юсав ĕçĕсем пурнăçламалла пулать, строительство ĕçĕсен хакĕ – 22,1 млн тенкĕ. Элĕк – Ишек çула юсама 19,2 млн тенкĕ уйăрса панă.

2013 çулта район территорийĕнчи вырăнти пĕлтерĕшлĕ пурте усă куракан автоçулсене тата вĕсем çинчи 200 километр ытла искусствăлла сооруженипе 9 кĕпере тытса тăма 15 млн çурă тенкĕне яхăн уйăраççĕ, вăл шутран 14 млн тенкĕне яхăн республикăран тата 1 млн çурă тенкĕ ытларах вырăнти бюджетран.

2013 çулхи августăн 1-мĕшĕ тĕлне автомобиль çулĕсене тытса тăма 12,9 млн ытла тенкĕпе усă курнă ĕнтĕ. Кунсăр пуçне 376 километра яхăн вырăнти пĕлтерĕшлĕ çулсене пăхса тăма уйăрма палăртнă 4,4 млн тенкĕрен 3 миллион тенкипе усă курнă.

Район территорийĕнчи вырăнти пĕлтерĕшлĕ çулсемпе вĕсем çинчи искусствăлла сооруженисене юсама 5,4 млн тенкĕ уйăрма пăхнă (вăл шутран республикăран 4 млн тенкĕне яхăн).

Электрон формипе уçă аукцион ирттерсе Мăн Сĕнтĕр – Ильинка автоçула юсама подряд организацине палăртрăмăр. Ку вăл – «Стройтранс» ООО. Иртнĕ уйăхра ку организаципе муниципалитет контракчĕ çырнă, строительсем çуран çÿрекенсем валли çулсем хатĕрлеме тытăннă ĕнтĕ.

Халĕ республика бюджетĕнчен 1,7 млн тенкĕне яхăн хушма укçа-тенкĕ уйăрса панă. Çавна май «Атăл – Вăрăмой» автоçула юсассипе поектпа смета документацийĕ хатĕрлес ĕçсем пыраççĕ.

Ялсенчи çулсене 4,79 километр юсама палăртнă. Çавна валли 10 миллион çурă ытларах тенкĕ уйăраççĕ. Кăçалхи августăн 1-мĕшĕ тĕлне ĕçсен 19 ытларах процентне пурнăçланă, 2 млн ытла тенкĕпе усă курнă. Пĕтĕмĕшле илсен çак вăхăта пур ял тăрăхĕсем те аукционсемпе котировкăсем ирттернĕ ĕнтĕ, ĕçсем пуçăннă.

Кăçал нумай хватерлĕ çуртсен 4 картишĕнче юсав ĕçĕсем ирттермелле. Çавна валли 3,8 млн тенкĕне яхăн пăхса хунă. 1млн тенкĕне яхăн усă курнă ĕнтĕ.

Хальхи вăхăтра Çурлатри ялĕнчи Воробьев урамĕнче çул тăвас ĕçсен малтанхи тапхăрĕ пуçланчĕ темелле. Кунта автомобиль çулĕ тума аукцион ирттеретпĕр. Пĕтĕмпе 5,6 млн тенкĕне яхăн ĕç пурнăçламалла, вăл шутран 5,3 млн тенкĕ республика уйăрать.

Çын пÿрт лартать пулсан ял пурăнать теççĕ. Район шайĕпе илсен те ку танлаштару вырăнлă. Районта çак вăхăта строительство ĕçĕсем чарăнса ларман, вĕсем çулран-çул сарăлсах пыраççĕ. Апла пулсан малашлăха çирĕп шачăкпа пăхма пултаратпăр. Çынсен пурнăç условийĕсем те лайăхлансах пырĕç.

Май килнипе усă курса вара районти строительство комплексĕн мĕн пур ĕçченĕсене, отрасль ветеранĕсене ыранхи професси уявĕпе чун-чĕререн саламлатăп, ăнăçу, ырлăх-сывлăх сунатăп.

# Айтăр спортпа туслă пулар!

Паян – Физкультурник кунĕ



***Физкультурăпа, спортпа туслă пулни, сывă пурнăç йĕркине пăхăнни пуриншĕн те пысăк пĕлтерĕшлĕ каламасăрах паллă. Физкультурăпа спорта аталантарас ĕçе район администрацийĕн физкультурăпа спорт тата туризм секторĕ те хăйĕн тÿпине хывать. Ку ĕç-хĕл пирки сектор ертÿçи Владимир ПЕТРОВ каласа парать:***

– Паянхи куна çамрăксемпе физкультура енĕпе ĕçлеме районта 62 специалист пур. Вĕсенчен 31-шĕ физкультура учителĕсем, 21-шĕ тренер-преподавательсем, 10-шĕ инструкторсем.

Пĕтĕмĕшле пĕлÿ паракан вĕренÿ учрежденийĕсенче физкультура занятийĕсенче тата класс тулашĕнчи мероприятисенче хальхи технологи мелĕсемпе анлă усă кураççĕ. Вырăнсенче спортпа техника бази япăх мар пулни спортăн чылай енĕпе занятисене çÿллĕ шайра ирттерме, мероприятисене вĕренекенсене нумайрах хутшăнтарма май парать. Çакă район тата республика ăмăртăвĕсене мĕнле хутшăннинче те палăрать.

Çуллен спортăн 8 тĕсĕпе шкул ачисен спартакиадине ирттеретпĕр. Муркаш районĕн пĕрлештернĕ команди Чăваш Ен Пуçлăхĕн кубокне çĕнсе илессишĕн ирттерекен шкул ачисен спартакиадине те активлă хутшăнать. Уйрăмах йĕлтĕрçĕсем хăйсен çитĕнĕвĕсемпе савăнтараççĕ. Волейболистсем пĕр хут кăна мар республика ăмăртăвĕсен призерĕсем, боксерсем республика тата Раççей ăмăртăвĕсен призерĕсемпе çĕнтерÿçисем пулса тăнă.

Муркашра «Сывлăх» физкультурăпа спорт комплексĕ хута кайнă май спорт занятийĕсем ирттерме çĕнĕ майсем уçăлчĕç. Физкультура урокĕ шучĕпе пур шкулсем те вĕренекенсене спорт комплексне тÿлевсĕр илсе çÿреме пултараççĕ. Уйрăмах бассейнра ишме кăмăл тăвакансем сахал мар.

Çитĕнекен ăрăва спортпа туслаштарас енĕпе вĕсен ашшĕ-амăшĕн ку тĕлĕшри позицийĕ те пысăк пĕлтерĕшлĕ. Ачасем чи малтанах аслисенчен тĕслĕх илме тăрăшаççĕ.

Ачасемпе çамрăксен районти спорт шкулĕнче спортăн 8 тĕсне аталантарассипе ĕçлеççĕ. Кунта 960 çамрăк вĕренет тата спортри хăйĕн ăсталăхне туптать. Çак хисепрен 12-шĕ – ăнăçсăр çемьесенчен, çул çитменнисен комиссийĕнче учетра тăракансем. Иртнĕ çул массăллă разряд спортсменĕсене 346, 1-мĕш разряд спортсменĕсене 18, спорт мастерĕн кандидачĕсене 2 хатĕрленĕ.

Ĕç çыннисем хушшинче физкультурăпа спорт ĕçне йĕркелессин структури предприятисемпе организацисенчи, учрежденисенчи тата ял тăрăхĕсенчи физкультура коллективĕсемпе çыхăннă. Вĕсем хушшинче çуллен ĕç çыннисен спартакиадине спортăн 14 тĕсĕпе ирттеретпĕр. Ку ăмăртусене чи активлă хутшăнакансем хушшинче хуçалăхсем хушшинчи «Моргаушская» строительство организацине, «Моргаушская» чăх-чĕп фабрикине, «Оринино», Ильич яч. хис. хуçалăхсене, шалти ĕçсен районти пайне, Муркаш райповне, Муркаш, Çатракасси, Юнкă ял тăрăхĕсене палăртмалла. 2012 çулхи спартакиада итогĕсемпе шалти ĕçсен районти пайĕн, «Юнга» тата «Оринино» хуçалăхри физкультура коллективĕсем çĕнтерÿçĕсем пулса тăчĕç.

Вырăнсенче физкультура юхăмне аталантарассишĕн ял тăрăхĕсен администрацийĕсем ответлă пулса тăраççĕ. Физкультурăпа спорт занятийĕсем ирттерме общественник-инструкторсене явăçтарни ырă тĕслĕх пулса тăрать. Ял тăрăхĕсенче ирттерекен спорт мероприятийĕсене çынсем ялан активлă хутшăнаççĕ. Ярапайкасси, Çатракасси, Чуманкасси, Мăн Сĕнтĕр, Муркаш ял тăрăхĕсем ку енĕпе уйрăмах пуçаруллă. Вĕсем юлашки вăхăтра вырăнта кăна мар, район тата республика шайĕнчи мероприятисем те ирттереççĕ. Çав вăхăтрах Катькас, Йÿçкасси ял тăрăхĕсенче ку ĕç тивĕçлĕ шайра мар-ха.

Вырăнсенче спортпа патриотика клубĕсене йĕркеленине ырă енчен палăртмалла. Районта çак вăхăта спортпа патриотика клубĕсем 5. Вĕсем çамрăксем хушшинче физкультурăпа спорта аталантарассипе пысăк тĕкĕ пулса тăраççĕ.

Уйрăм спорт тĕсĕсем енĕпе федерацисем аталанса пыни те пĕлтерĕшлĕ. Район администрацийĕ вĕсемпе тачă çыхăну тытма тăрăшать. Çакă физкультура юхăмне пысăкрах шая çĕклеме май парать.

Çулленех районта спортăн 16 тĕсĕпе район тата вырăнти шайри ăмăртусене 50 ытла йĕркелетпĕр. Вĕсене 8 пин ытла çын хутшăнать. Вĕсенчен 15-шĕ республика ăмăртăвĕсем шутне кĕнĕ. Çăмăл атлетсен Олимп чемпионки Валентина Егорова ячĕпе ирттерекен кросĕ, Чечен вăрçин паттăрĕсене Николай Дмитриева тата Леонид Семенова асăнса хăвăрт утассипе, Раççей Геройĕн Евгений Борисовăн парнисене çĕнсе илессишĕн ирттерекен мини-футбол, Социализмла Ĕç Геройĕн Евтихий Андреевăн парнисене çĕнсе илессишĕн ирттерекен йĕлтĕрçĕсен, ОМОН салтакĕн Григорий Кудьковăн парнисене çĕнсе илессишĕн волейболистсен, «Хыпар» хаçат парнисене çĕнсе илессишĕн çăмăл атлетикăпа, Юрий Федотова асăнса йĕлтĕрпе ăмăртса чупассипе, Сергей Павлова асăнса мини-футбол енĕпе, волейболла выляссипе «Росгосстрахăн» куçса çÿрекен кубокне çĕнсе илессишĕн тата ытти ăмăртусем çÿллĕ шайра иртеççĕ, çуллен нумай-нумай спортсмена пухаççĕ. Çавăн пекех çăмăл атлетикăпа Муркаш райповĕн парнисене, «Çĕнтерÿ ялавĕ» хаçатăн куçса çÿрекен кубокĕсене çĕнсе илессишĕн иртекен ăмăртусене палăртмалла. Районта виççĕмĕш çул ĕнтĕ районти тĕп больницăн тĕп врачĕн В. Даниловăн парнисене çĕнсе илессишĕн волейболла выляссипе 50 çултан аслăрах арçынсен командисем хушшинче ăмăрту иртет.

Физкультурăпа тата спортпа туслисем валли районта 26 спорт залĕ пур, 2008 çулта Муркашра «Сывлăх» физкультурăпа спорт комплексĕ хута кайрĕ. Кунсăр пуçне вырăнсенче спорт сооруженийĕсене площадкăсем 97 йĕркеленĕ, Муркаш шкулĕнче пăшалтан пемелли тир, Муркашра йĕлтĕр бази, Юнкăпа Мăн Сĕнтĕр, Сыпай шкулĕсенче тата Муркашпа Калмăккассинче хоккей площадкисем пур.

Юлашкинчен вара спортпа, физкультурăпа туслă мĕн пур çынна – спортсменсене, физкультурниксене, преподавательсемпе тренерсене, çак ĕç ветеранĕсене, сывă пурнăç йĕркине кăмăллакансене пурне те Физкультурник кунĕ ячĕпе саламлатăп, пурсăра та çирĕп сывлăх, ăнăçу сунатăп.

Спорт

## Чăваш Ен – Раççейре 2-мĕш

**2012 çул итогĕсемпе Чăваш Ен физкультурăпа спорт ĕçне йĕркелессипе Раççей регионĕсем хушшинче ирттернĕ рейтингра иккĕмĕш вырăна тивĕçнĕ. Пĕтĕм Раççейри смотр-конкурс итогĕсене пĕтĕмлетнĕ май кун пирки федерацин Спорт министерстви пĕлтернĕ.**

Пĕрремĕш вырăнта Пушкăрт Республики, виççĕмĕшĕнче – Тюмень облаçĕ. Конкурс ирттернĕ май ĕç-хĕле 6 кăтарту енĕпе хак панă: физкультурăпа спорт, ачасемпе çамрăксен спорчĕ тата спорт резервĕ хатĕрлесси, чи пысăк çитĕнÿсен спорчĕ, вырăнти условисене шута илсе йĕркеленĕ физкультурăпа спорт, физкультурăпа спортăн пурлăхпа техника никĕсĕ, физкультурăпа спорта финансласси.

## 90 çул – сумлă вăхăт

***2013 çулта спорт отраслĕ Раççей Федерацийĕнче физкультурăпа спорт сферинче федераци (патшалăх) тата территори ĕç тăвакан влаç органĕсене йĕркеленĕренпе 90 çул çитнине паллă тăвать. Физкультурăн чи аслă канашне СССР-та 1923 çулхи июнĕн 27-мĕшĕнче çирĕплетнĕ. Тĕлĕнмелле пулин те, çав кунах Чăваш облаç ĕçтăвкомĕн президиумĕ Физкультурăн облаçри канашне туса хурасси пирки йышăну кăларнă. Унăн председателĕ пулма облаçри çар комиссарне И.Е. Ефимова çирĕплетнĕ.***

Юбилей кунне тата Физкультурниксен кунне халалласа августăн 8-мĕшĕнче республика тĕп хулинче К.В. Иванов ячĕллĕ Чăваш академи драма театрĕнче уяв мероприятийĕ иртнĕ. Унта Чăваш Ен Пуçлăхĕ Михаил Игнатьев та хутшăннă.

Уявăн савăнăçлă пайне Чăваш Ен спорт министрĕ Сергей Мельников уçнă. Хăйĕн сăмахĕнче вăл республикăра спорт лайăх аталаннине палăртнă. «Енчен те малтанхи çулсенче спорт кружокĕсем çеç ĕçленĕ пулсан, паян анлă аталаннă спорт отраслĕ пирки калама пулать», – тенĕ министр. Юлашки çулсенче ку енĕпе уйрăмах тухăçлă ĕçленĕ. Спорт сооруженийĕсен анлă сетьне туса хунă. Çакă вăл – федераци министерствипе аллăн тытăнса ĕçлесе пынин кăтартăвĕ. Çак вăхăтра спорт секцийĕсемпе клубĕсем тата шкулĕсем витĕр миллионшар çын тухнă.

Çулсеренех пирĕн спортсменсем тĕрлĕ шайри пысăк ăмăртусене хутшăнса çĕнĕрен çĕнĕ çитĕнÿсем тăваççĕ. Юлашки çулсенче Чăваш Ен Спорт министерстви çĕр-шыври регионсенчи авторитетлă спорт ведомствисенчен пĕри пулса тăнă. Физкультурăпа спорт ĕçне йĕркелессипе Раççейре ирттернĕ конкурсра 2012 çул итогĕсемпе Чăваш Ен ытти регионсем хушшинче 2-мĕш вырăн йышăнма пултарни те çавнах çирĕплетет.

Михаил Игнатьев пухăннисене физкультурăпа спорт тытăмне йĕркелесе янăранпа 90 çул çитнине палăртса пухăннă мĕн пур спорт ĕçченне уяв ячĕпе саламланă. Республика Пуçлăхĕ муниципалитет йĕркелĕвĕсен ертÿçисене спорта аталантарас, çынсене физкультурăпа туслашма пулăшас, сывă пурнăç йĕркине пропагандăлас тĕлĕшпе çине тăрса ĕçленĕшĕн тав сăмахĕ каланă.

Физкультурăпа спорт тытăмĕнче ĕçлесе чапа тухнă уйрăм ветерансемпе спорт ĕçченĕсене республика Пуçлăхĕ уяв мероприятийĕнче патшалăх наградисене парса чыс тунă. Вăл шутра Чăваш Республикин ачасен хушма вĕренĕвĕн «Ачасемпе çамрăксен Олимп чемпионки В. Егорова ячĕллĕ Муркашри спорт шкулĕ» вĕренÿ бюджет учрежденийĕн директорĕ Александр Сидюшкин Тав çырăвне тивĕçнĕ.

Мероприяти уяв концерчĕпе вĕçленнĕ.

# Вăл ачаран физкультурник

Тĕрленчĕк

Иртнĕ кун хăвăрт утакансен республикăри ăмăртăвĕнчен ÿсĕмпе тавраннă çамрăка Вячеслав Федорович каç пулттипе уй урлă киле ямарĕ, хăйĕн патне хваттере кĕртрĕ. Мăшăрĕ Нина Евстафьевна хатĕрленĕ апатпа сăйланнă хыççăн йывăр ăмăртура çĕнтерÿ тума пултарнă арçын ача канлĕ ыйха путрĕ. «7-мĕш класа çеç каять-ха вăл. Ÿсĕм чиккисем малта», – терĕ тренер канлĕ ыйхăри ача çине амăш куçĕпе пăхакан мăшăрне ырă каç сунса.

Сахал пулнă-и-ха кун пеккисем 63-мĕш çулпа пыракан тренерăн пурнăçĕнче? Пайтах. Анчах ăмăртуран каярах юлса тавранакан ачасене хăйĕн килĕнче йышăнма унăн çемйинче вашаватлăх яланах çитнĕ. «Тавах мăшăрăма кил ăшшине упранишĕн, манăн воспитанниксемпе тараватлă пулнишĕн», – шухăшларĕ спорт тусĕ çывăрмалли пÿлĕмелле иртнĕ май. Çак самантра унăн куçĕ умĕнче спорта халалланă çулсем иртрĕç, хăй хатĕрленĕ паллă спортсменсен сăнĕсем тухрĕç...

Хăвăрт иртет вăхăт. Тăван çĕр-шывăн Аслă вăрçи хыççăнхи çулсенче çуралнă арçын ача çулсем иртнĕçемĕн хăйĕн пурнăçне тĕппипех спорта халалларĕ. «Урăхла пулма та пултарайман, – шухăшларĕ ветеран. – Çурхи курăк çинче ăмăртмалла лапталла вылянттăмăр. Кунта вара хăвăрт чупаймасан, мечĕкпе инçерех тата тĕл переймесен ял ачисем умĕнче намăс. Çамрăклах атте-аннепе юнашар тăрса çурлапа тырă вырма, çавапа улăх-çаран ути çулма, выльăх-чĕрлĕх кĕтсе çÿреме алăра вăйĕ сахал мар кирлĕ. Ăна эпир мĕн пĕчĕкрен кулленхи ĕçре туптанă. Профессиллĕ спорт пирки шухăш пулман ун чухне, анчах кулленхи ĕç хăйне евĕр тренировкăччĕ».



1951 çулхи çу уйăхĕн 5-мĕшĕнче çуралнă Слава Муркашри Киселевсен çемйинче 7-мĕш ача пулнă. Çавăнта та пĕчĕкрененх пиччĕшĕсемпе аппăшĕн тĕслĕхне алла илме пуçланă вăл. Ĕçе юратни, физкультурăпа спорта çывăх тăни аслă пиччĕшне Геннадие çар офицерĕсен йышне тăратнă, тепĕр пиччĕшне Михаила Чăваш Республикин шалти ĕçсен министрĕ таран ÿссе çитме пулăшнă.

Слава та аслисенчен юлман. Ĕçрен пушаннă вăхăтсенче вăл ача чухнех хăйсен урамĕнчи тантăшĕсене пуçтарса ăмăртусем йĕркелетчĕ. Мала тухакансене хавхалантарма хăех значоксем хатĕрлетчĕ. Вăхăт иртнĕçемĕн çак тăрăшулăх унăн пурнăç çулне уçса пычĕ. Муркашри вăтам шкулта вĕреннĕ чух çамрăка кунта физкультура вĕрентнĕ В. Константинов спортпа туслаштарас ĕçе пысăк тÿпе хывре. Çак никĕс ăна 1971 – 1973 çулсенче Совет çарĕнче службăра тăнă вăхăтра пысăк тĕкĕ пулчĕ, спорт çулĕ çинех кĕртсе ячĕ.

Çартан тавраннă каччă Муркашри «Сельхозтехника» предприятине ĕçе вырнаçсан та обществăлла пуçарулăх çинче спортпа ĕçлеме пăрахмарĕ. Çамрăкăн тăрăшулăхне асăрхаса предприяти директорĕ А. Кушков В. Киселева Альметьевскри физкультура техникумне вĕренме янинчен пуçланать Вячеслав Федоровичăн физкультурăпа спортри професси çул-йĕрĕ.

Техникум хыççăн района таврăнсан пултаруллă çамрăка «Урожай» ирĕклĕ спорт обществин районти канашĕн ертÿçи пулма суйлаççĕ. Куçăмсăр майпа Чăваш педагогика институтĕнче вĕреннине пăхмасăр явапăха туйса ĕçлесе спорт мероприятийĕсен пултаруллă йĕркелÿçи Муркаш енри спорт аталанăвĕн никĕсне хывать. А. Сидюшкинпа паллашса ăна районти ДЮСШăн Муркаш шкулĕнчи уйрăмне ĕçлеме чĕннине Вячеслав Федорович районти спорт аталанăвĕшĕн пысăк утăм пулчĕ тесе шутлать. Пултарулăхне кура ăна кĕçех ДЮСШ директорне уйăрса лартни тата спорт тусĕсене унпа килĕшÿллĕ ĕçлесе пыни иртнĕ çулсенче Муркаш ятне спортра тĕнче шайне кăларма пултарчĕ.

Хăй вĕрентсе хатĕрленĕ малтанхи паллă спортсменсем çулсем иртсен те асран тухмаççĕ. Вĕсем: И. Костин, И. Смирнов, В. Кудряшов, О. Никитина (Макарова), А. Орлов тата вĕсенчен самай кĕçĕнреххине пăхмасăрах биатлонпа тĕнче класлă спорт мастерĕн нормативне тултарнă, Раççей пĕрлештернĕ командин членĕ Т. Моисеева.

Чăваш Республикин тава тивĕçлĕ тренерĕ малтанхи çулсенче йĕлтĕр спорчĕпе кăсăкланнă пулсан, юлашки вăхăтра Вячеслав Федоровича çамрăксене хăвăрт утассипе тата çăмăл атлетикăпа аталантарнине курма пулать. Вăл вĕрентнĕ 3 ача (Муркаш шкулĕнчи Р. Куликовпа А. Милютина тата Чуманкасси шкулĕнчи Р. Юсупов) кăçал Шупашкарти Олимп резервĕсен училищине кĕме хатĕрленни – тăрăшуллă ĕçченĕн черетлĕ ÿсĕмĕ.

Шухăш ÿсĕм çине çитсен ĕçри тăрăшулăхшăн хăй сахал мар Хисеп грамотисене тивĕçнине тишкерсе çакăнта пĕрле ĕçленĕ тата паян та юнашар вăй хуракансене вăл ятран аса илсе кайрĕ: М. Романов, А. Васильев, В. Скворцов, Н. Кондратьев, И. Воробьев, И. Смирнов, Р. Григорьев, Н. Скворцов, А. Савельев, С. Васильев, С. Паладьев, З. Углева, Р. Потапов, С. Яников, С. Алексеев т. ыт. те.

– Спорт – çĕр-шыв тĕреклĕхĕ, сывă пурнăç никĕсĕ. Çак çул çинче эпĕ пĕччен пулманнишĕн тата пирĕн вырăна çамрăксем активлă тăнишĕн чун савăнать, – терĕ спорт тусĕ.

**А. БЕЛОВ.**

# В. Тукмаков: «Тĕрлĕ региона пахалăхлă продукци ăсанать»

**Ыран – Строитель кунĕ**

*САЛАМЛАТПĂР, ТАВ ТĂВАТПĂР!*

*Строительство отраслĕн хисеплĕ ветеранĕсем тата паянхи ĕçченĕсем, сире пурсăра та профессии уявĕ ячĕпе саламлатăп.*

*Ĕнерхи специалистсен пултарулăхĕ, паянхи ĕçченсен тăрăшулăхĕ – хальхи завод сăн-сăпачĕ. Сирĕн тивлетĕрпе – Муркаш предприятийĕ республика тулашĕнче те ăнăçлисен шутĕнче. Пирĕн продукци ял-хула инфраструктурине йĕркелеме пулăшать.*

*Коллектив ÿсĕм çулĕпе пусăм хыççăн пусăм çÿлеллех хăпарать. Апла пулсан кашниех тав сăмахне кăна тивĕç. Малашне татах та тухăçлăрах тăрăшма çирĕп сывлăх, вăй-хăват тата ăнăçу пултăр, уяв уяв пек килтĕр.*

**Завод администрацийĕ.**

***ĔÇ ВЫРĂНĔСЕМ ПУР***

***Муркашри кирпĕч завочĕ ĕç вырăнĕсем пуррине пĕлтерет. Ĕç укçине вăхăтра тÿлет.***

***Коллективлă килĕшÿпе пăхнă çăмăллăхсем пур. Тĕплĕнрех ыйтса пĕлме 62-3-47 телефонпа шăнкăравлăр.***



**Вячеслав Баранов, Владимир Абрамов (маçтăр, заводра 15 çул вăй хурать), Ольга Федорова, Любовь Волкова рабочисем халăха пахалăхлă продукципе тивĕçтерес тесе ырми-канми тăрăшаççĕ.**

**Кăçалхи çичĕ уйăхра районти промышленноç предприятийĕсем 972 миллион тенкĕлĕх продукци кăларнă, çак пĕтĕмĕшле калăпăшра Муркашри кирпĕч завочĕн тÿпи 6,3 процент чухлĕ. Юлашки çулсенче вăл ăнăçлă аталанакан предприятисенчен пĕри шутланать. Çакă, паллах, ертÿçĕрен нумай килет, çавăн пекех кунти ĕçченсен тăрăшулăхĕнчен те. Акă çичĕ çул ĕнтĕ Владимир Тукмаков директор предприятие тухăçлă ертсе пырать. Заводри пĕтĕмĕшле ĕç-хĕле вара унăн çумĕ Юрий Петров ăнăçлă йĕркелет.**

**Уяв умĕнхи калаçура Владимир Петрович завод пурнăçĕпе паллаштарма кăмăл турĕ:**

– Пирĕн пĕрлехи тĕллев – предприятие тухăçлă ĕçлеттересси, малашне те тухăçлă та ăнăçлă аталантарасси. Çакна вара туллин вăя кĕртме пирĕн майсем çителĕклĕ.

Пурлăхпа техника базине тăтăшах çĕнетсе пыратпăр. Кунта ĕçлекенсене турттармалли ятарлă автотранспорт пур. Нумаях пулмасть татах çĕнĕ автомашина туянтăмăр. Малашне те ку енĕпе тĕллевлĕ ĕçлеме палăртатпăр. Çĕнĕ техника-оборудованин вăй-хăвачĕ пысăк, тăкакĕ пĕчĕк. Пуçламăш çулсенче заводра йăлтах алă вăйĕпе тăрăшнă пулсан, паян автоматизаци мелĕ тĕпре тăрать.

Экономика тĕлĕшĕнчен ăнăçлă аталаннине кура кăçал эпир республика кунĕ шайĕнчи «Регионсем – килĕштерсе ĕçлессин чикки çук» курава хутшăнма йыхрав илтĕмĕр, хамăр ĕç-хĕлпе паллаштарма тата килĕшÿсем тума пултартăмăр. Çавна май Чăваш Республикин Экономика аталанăвĕн, промышленноç тата суту-илÿ министерствин Дипломне тивĕçрĕмĕр.

Паянхи кун тĕлне заводра 152 çын вăй хурать, унччен маларах 120-е яхăн пулнă. Çуллахи вăхăтра çурт-йĕр çĕклес ĕç ытларах пулнине шута илсе шкул ачисене те явăçтаратпăр. Саккунпа килĕшÿллĕн вĕсем кĕскетнĕ ĕç кунĕпе тимлеççĕ, кирпĕч сортлаççĕ. Кунта тимлекенсен вăтам ÿсĕмĕ хĕрĕх çула яхăн. Апла пулсан пысăк тухăçпа тăрăшмалли йыш теме пулать. Иртнĕ çулсенчи йывăр тапхăр коллектива пысăк парăм умне тăратрĕ пулсан халĕ вара завод ку енĕпе йĕркеллĕ ĕçлесе пырать.

Икĕ кăмака талăкĕпех тулли хăватпа ĕçлет, пирĕн продукцие туянакан яланхи клиентсем йышлă. Хатĕр кирпĕч картишĕнче сутăнмасăр пачах та купаланса выртмасть, мĕн хатĕрлени йăлтах вырнаçать. Çакă ытларах та ытларах продукци туса кăларма хавхалантарать. Кунсерен заводран пин-пин штук кирпĕч ăсанать. Пĕр талăкра халĕ икĕ кăмакаран 46 – 48 пин штук кирпĕч тухать, иртнĕ çулта ку кăтарту 42 пин штукпа танлашнă, туянас текенсене хатĕр продукципе туллин тивĕçтерме тăрăшатпăр. Енчен те продукцие картишĕнче кăна упрассишĕн хатĕрленĕ пулсан тупăш илесси те пĕчĕк пулнă пулĕччĕ.



**Елена Тихомирова, Светлана Семенова, Виталий Ефимов, Альбина Кирпичникова (ĕç стажĕ 25 çул), Татьяна Козлова, Галина Ипатьева завод ăстисем чĕрĕ кирпĕче вĕри кăмакана ăсатма хатĕрлеççĕ, вĕсен ĕçĕ пысăк ответлă пулнине аван туяççĕ.**

Продукци пысăк пахалăхлă, çавна май çурт-йĕр çĕклессинче шанчăклă пулнине кура республикăра çеç мар, унăн тулашĕнче те аван туянаççĕ. Пысăк парти турттаракансемпе маларахах килĕшÿсем туса хунă ĕнтĕ. Ытти чухнехи пекех продукци ытларах Хусана (хатĕр продукцин 70 проценчĕ) ăсанать. Эпир пысăк регионсене тивĕçтерме пултарни пире, паллах, хăпартлантарать. Çавăн пекех Муркаш кирпĕчне туянма Мари Эл Республикинчен (20 процент) килеççĕ, ытти пайĕ вара хамăр республика çыннисем валли.

**– Апла пулсан эсир ку тĕлĕшри рынокра ура çинче çирĕп тăратăр, сирĕн ят-сумăр та çÿлте?**

– Рынокри ăнăçлăха пысăк пахалăхпа ăнлантармалла. Эпир технологие çирĕп пăхăнса ĕçлетпĕр. Кирпĕч тунă çĕрте усă куракан тăма кашни кун пахалăх тĕлĕшпе лабораторире тĕрĕслетпĕр. Кирпĕч хатĕрлемелли тĕп материал – тăм – çилпе хĕвел, юр, çумăр пулăшнипе пĕр çуллалăк пиçсе, пулса выртать. Кайран тин производствăна каять. Унччен вара маларах хатĕрленипе усă куратпăр. Пирĕн патран 100, 125, 150 маркăллă стандартлă кирпĕч тухать.

**– Çулсеренех ÿсекен тупăш татах та ытларах тимлеме хавхалантарни куç умĕнче.**

– Çапла, ĕç ăнăçсан татах та ытларах тăрăшас кăмăл пысăкланать. Иртнĕ çул пирĕн коллектив 11 миллион та 534 пин штук кирпĕч хатĕрлесе кăларнă, кăçалхи çичĕ уйăхра вара – 8 миллион та 602 пин штук. Предприяти продукцирен иртнĕ çул 78 миллион та 481 пин тенкĕ тупăш илнĕ, кăçалхи çичĕ уйăхра – 62 миллион та 678 пин тенкĕ.

**– Кунта ĕçлекенсем те шалу укçи калăпăшĕпе кăмăллă пулĕ?**

– Иртнĕ çул пĕр уйăхри вăтам ĕç укçи калăпăшĕ 13 634 тенкĕ пулнă, кăçалхи çичĕ уйăхра – 19 пин те 607 тенкĕ. Рабочисем уйăхсерен икĕ хутчен шалу илеççĕ. Унсăр пуçне коллективлă килĕшÿпе хăш-пĕр çăмăллăхсем палăртса хунă. Çапла вара пирĕн ĕçченсен тупăш хăватпа вăй хума чăрмав çук тесе шутлатăп.

Кадрсен ыйтăвне ăнăçлă татса пама тăрăшатпăр. Чылай çул ĕçлекен специалистсем – çамрăксен вĕрентÿçисем. Вĕсем яланах ыра канаш-сĕнÿ пама хатĕр.

**Р. ИЛЛАРИОНОВА хатĕрленĕ.**

**Автор сăн ÿкерчĕкĕсем.**

## Хисеп грамотипе наградăланă

Район администрацийĕн 2013 çулхи августăн 8-мĕшĕнчи йышăнăвĕпе строительство сферинче чылай çул хушши тÿрĕ кăмăлпа вăй хунăшăн çаксене район администрацийĕн Хисеп грамотипе наградăланă:

– **Эдуард Владимирович ВОРОНОВА**, «Муркашри кирпĕч завочĕ» акционерлă хупă обществăн платникне;

– **Светлана Валентиновна ИВАНОВĂНА**, «Муркашри кирпĕч завочĕ» акционерлă хупă обществăн техник лаборантне;

– **Галина Пименовна ИПАТЬЕВĂНА**, «Муркашри кирпĕч завочĕ» акционерлă хупă обществăн садчикне;

– **Радислав Аркадьевич ТИХОНОВА**, «Муркашри кирпĕч завочĕ» акционерлă хупă обществăн электрогазосварщикне.



**Анатолий Павлов – çамрăк специалист. Шанса панă ĕçе яланах тÿрĕ кăмăлпа пурнăçлать, тăрăшуллă водительте пысăк малашлăх пурри курăнать. Çавна май ăна завод администрацийĕ çĕнĕ автомашинăпа ĕçлеме шанчĕ.**

***ЗАВОД СĔНЕТ***

***Халăха сутмалли сортлă 100 маркăллă 1 пин штук кирпĕч – 9027 тенкĕ, 125 маркăлли – 9495 тенкĕ, 150 маркăлли – 10207 тенкĕ.***

***Кондицие ларман 1 пин штук кирпĕч – 4484 тенкĕ, 1 кубла метр вак кирпĕч – 1652 тенкĕ.***

***Транспорт услуги 1 километршăн – 70,80 (пĕр енне) тенкĕ.***

***Кирпĕч айне хумалли поддон (пĕрин çине 250 штук кирпĕч вырнаçать) 118 тенкĕ тăрать.***

# В. Семенов: «Тăван районăмăр хăтлăхĕшĕн, çынсен кăмăлне тивĕçтерессишĕн»

**Аталану çулĕпе**

***Муркаш салин вунă-вун пилĕк çул каяллахи сăн-сăпатне аса илер-ха. Самай урăхла ӳкерчĕкчĕ вĕт. Халĕ вара нумай хваттерлĕ çуртсем умлă-хыçлă çĕкленнипе район центрĕ пĕр-пĕр поселок-хула евĕр курăнма пуçларĕ, уйрăмах кирпĕч заводĕ енчен килекен çул тăрăх Муркашалла кĕнĕ çĕрте. Çакă – пурнăç ырă еннелле улшăнать тенин пĕр утăмĕ. Çапла вара нумай хваттерлĕ çуртсем çĕкленни хальхи Муркашăн уйрăмли пайĕ пулса тăчĕ. Ахальтен мар ĕнтĕ кăçал республикăри райцентрсенчи ял тăрăхĕсен пуçлăхĕсен канашлăвĕ те Муркашра иртрĕ. Строительство ĕçĕ малашне те çак шайрах аталанса пырасса шанас килет. Унччен кунта икĕ хутлă çуртсем пулнă пулсан халĕ ытларах 3 – 4 хутлисем вăя кĕреççĕ, вĕсем йăлтах паянхи пурнăç ыйтăвне тивĕçтерекеннисем – çĕнĕ йышши технологие пурнăçланисем. Çак аталанура МСО "Моргаушская" акционерсен хупă обществи тĕп вырăн йышăнать, çапла вара районăн экономикăпа социаллă аталанăвĕнче унăн тӳпи пысăк.***

***Професси уявĕ умĕн асăннă организацин генеральнăй директорĕ, депутатсен районти Пухăвĕн депутачĕ, район администрацийĕн пуçлăхĕ çумĕнчи обществăлла канаш членĕ, предпринимательсен канашĕн ертӳçи Владислав Семенов каласа пама кăмăл турĕ:***

– Çуртсене эпир халĕ йăлтах çĕнĕ технологипе усă курса тăватпăр, çак ĕçре газосиликат блоксем, кантăк пакетсем питĕ меллĕ тата пахалăхлă. Çынсен ыйтăвĕсене шута илсе хваттерсене кашнине уйрăммăн хутса ăшăтассине пăхса хăварнă. Çакă 30 – 40 процент чухлĕ ăшă перекетлеме май парать.

***«МСО» СĔНЕТ:***
***МСО "Моргаушская" акционерсен хупă обществи районти хуçалăхсен, организацисен, уйрăм çынсен çурт-йĕрне тĕпрен çĕклеме, юсама, реконструкци тума пулăшать. Унсăр пуçне хăватлă, ятарлă техникăпа – кранпа, экскаваторпа тата ыттипе тивĕçтерет.***

Строительсен ушкăнĕн тĕп тĕллевĕ – район ăнăçлăхĕшĕн ĕçлесси, çынсене пысăк пахалăхлă çурт-йĕрпе тивĕçтересси, çакăнпа çыхăннă ытти ыйтăва çăмăллатма пулăшасси.

Граждансене хăтлă çурт-йĕрпе тивĕçтерес тĕлĕшпе Раççей Президенчĕн тата Чăваш Республикин Пуçлăхĕн программисем районта туллин вăя кĕреççĕ. Çавна май районти çамрăк çемьесем, ветерансем, ял хуçалăхĕнче ĕçлекенсем тата ытти категори граждансем тĕрлĕ çăмăллăхпа, субсидипе усă курса çурт-йĕрлĕ пулаççĕ. Çакăнта район администрацийĕн пуçлăхне Ростислав Тимофеева ырăпа асăнса хăварас килет. Вăл çурт-йĕр çĕклес тĕлĕшпе патшалăх шайĕнчен уйăракан пулăшăва район аталанăвне ытларах явăçтарассишĕн тăрăшать. Çавăн пекех капиталлă строительство тата обществăлла инфраструктурăна аталантарассин управленийĕ те пирĕн хăш-пĕр ыйтăва татса пама пулăшать. Нумай хваттерлĕ çуртсем çĕклессинче "Россельхозбанкăн" районти хушма офисĕпе тачă çыхăнса ĕçлетпĕр.

Йывăр вăхăтра та çурт-йĕр çĕклессине чакармарăмăр. Çакă эпир тупăш тăвассишĕн кăна мар, район аталанăвĕшĕн, сăн-сăпачĕшĕн, çынсен ыйтăвне туллин тивĕçтерессишĕн туллин хăватпа тăрăшнине тепĕр хут çирĕплетет. Чи пĕлтерĕшли вара – çурт-йĕрлĕ пулас текен çын çĕнĕ хваттерте хăйне ăшă те меллĕ туйтăр.

Коллектив 49 çынран тăрать. Тĕрлĕ специалистлă йыш пĕр объект вĕçне тухиччен теприне пуçлать, эпир ĕççĕр лармастпăр. Сивĕсем пуçланиччен никĕс хăпартса хăваратпăр, çынсене хĕлле те ĕçпе тивĕçтеретпĕр, çурт çĕклессинче хваттер туянас текенсен укçи-тенкине те явăçтаратпăр. Ĕçленĕшĕн вăхăтра тӳлетпĕр. Унсăр пуçне социаллă тӳлевсем вăйра тăраççĕ.

Парковая урамра çурт-йĕр çĕклес ĕç тулли хăватпа пырать. Унсăр пуçне картишсене хăтлăх кĕртетпĕр, ача-пăча выляммалли тӳремсем те тăватпăр. Хальхи вăхăта тивĕçтерекен çуртсем тул енчен пăхма кăна мар, шалтан та питĕ хăтлă тата ăшă, шывпа тăваттăмĕш хутрисем те пĕр йывăрлăхсăрах усă курма пултараççĕ. Хваттерти пĕр тăваткал метр хакĕ 28 пин тенкĕ тăрать. Хальхи вăхăтра пирĕн ĕçченсем Москакассинче икçĕр çын вырнаçмалăх объект çĕклессипе тимлеççĕ. Кунта йăлтах çĕнĕ технологипе усă кураççĕ.

Пирĕн коллектив ĕçре кăна мар, спортра та питĕ пултаруллă, ăмăртусем ирттересси самай малтан пуçланнă. Кунти организацие маларах ертсе пынă, Хура тăпраллă мар зонăри агропромстройăн тава тивĕçлĕ строителĕ Николай Гусак ячĕллĕ парнене çĕнсе илессишĕн волейбол турнирне çулсеренех ирттеретпĕр.

Бокспа хоккей енĕпе ăмăртусене хутшăнакансене пулăшасси те йăлана кĕнĕ. Организацин спорт залĕнче бокс секцийĕ ĕçлет. Ăна СССР спорт мастерĕ С. Черкашин тренер ирттерет. Кунта вырăнта ĕçлекенсем кăна мар, çывăх шкулсенчи, ялсенчи çамрăксем те çӳреççĕ.

**ПИРĔН ИСТОРИ**

МСО коллективĕ 1959 çултанпа ĕçлет. Унтанпа вăхăчĕ самай иртрĕ. Чи малтан вара паянхи организаци "Колхозсем хушшинчи строительство материалĕсен завочĕ" ятпа ĕçлеме пуçланă. В. Семенов коллектива улттăмĕш çул ертсе пырать. Çапах та Муркашри МСО ăнăçлă ĕçленĕ тапхăр Николай Александрович Гусак ертсе пынă çулсене (1976 – 1999) тивет. Çак тапхăрта асăннă организацин пĕтĕмĕшле бази çĕкленнĕ. Çавăн пекех администраци, амбулатори çурчĕсем, ача-пăча сачĕсем, спорт залĕсем, силос траншейисем, общежитисем çĕкленĕ – çаксем йăлтах эпир паян усă куракан объектсем.

Николай Александровичпа пĕр вăхăтра тимленĕ, хисепе тивĕçлĕ ĕçченсем: Е.М. Андреева, Г.Е. Яндимиркина, Л.И. Яндимирова, М.И. Хошкин.

**ХИСЕПЛĔ СТРОИТЕЛЬСЕМ, ÇАК ĔÇĔН СУМЛĂ ВЕТЕРАНĔСЕМ!**

**Эпĕ сире пурне те професси уявĕпе – Строитель кунĕ ячĕпе – чунтан саламлатăп!**

**Каламасăрах паллă, çак ĕç чăннипех те йывăр та кăткăс тата сумлă, сирĕн професси уйрăмах Муркаш районĕшĕн пысăк пĕлтерĕшлĕ. Çакăнти çурт-йĕр, ытти объектсем йăлтах строительсен аллипе çĕкленнĕ. Апла пулсан хăтлăх сирĕн профессипе тачă çыхăннă.**

